***Коротаева Лариса Валерьевна***

канд. филол. наук, доцент

Стерлитамакский филиал

ФГБОУ ВО «Башкирский государственный университет»

г. Стерлитамак, Республика Башкортостан

# СВАДЕБНЫЙ ОБРЯД ДЕРЕВНИ КИРЮШКИНО ФЕДОРОВСКОГО РАЙОНА РЕСПУБЛИКИ БАШКОРТОСТАН

***Аннотация****: в статье на материале деревни Кирюшкино Федоровского района РБ рассматривается свадебная обрядность чувашей. В ходе данного исследования проследили, как отражается говор в свадебных песнях, используемых на разных этапах свадьбы: в начале свадьбы, в конце свадьбы, при переходе в другой дом, во время движения по улице, перед воротами дома нового родственника. Автором обнаружены в свадебных песнях диалектные слова, которые представляют собой слова разных лексико-семантических групп: это и продукты питания, напитки, термины родства и другие лексико-семантические группы слов.*

***Ключевые слова****: чувашская свадебная обрядность, свадебные песни, сватовство, сваха, посаженый отец, посаженая мать, главный свадьбы, ведущий свадьбы.*

***Аннотаци***: статьяра Пушкăртстан Республикин Федоровка районне кĕрекен Ашкадар ялĕнчи материала тĕпе хурса чăвашсен туй йăли-йĕркине çырса кăртнă. Асăннă тĕпчев ĕçĕнче туйăн тĕрлĕ тапхăрĕнче тата вырăнĕнче (туй пуçламăшĕнче, туй ăсаннă чухне, тепĕр çурта каçнă чух, урамра, çĕнĕ хăта çурчĕн хапхи умĕнче) юрлакан юрăсенче вырăнти калаçу чĕлхи епле палăрнине сăнанă. Автор туй юррисенче апат-çимĕçе, ĕçмене, ăру-тăванлăха палăртакан тата ытти лексикăпа семантика ушкăнĕсене кĕрекен вырăнти калаçу сăмахĕсене тупса палăртнă.

***Тĕп сăмахĕсем***: чăваш туй йăли-йĕрки, туй юррисем, çураçу, евчĕ, хăйматлăх атте, хăйматлăх анне, туй пуçĕ



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Работа выполнена при финансовой поддержке РФФИ, проект №19–012–00498/19.*

Пушкăрт патшалăх университечěн Çтерлěри филиалěн тутар тата чăваш филологи кафедрин преподавателěсем Раççейри фундаменталлă тěпчев фончěн гранчěпе усă курса 2019 çулхи утă уйăхěн 12–14-мěшěсенче Федоровка районěнчи Теней, Ашкатар, Урал, Кинчеккей чăваш ялěсенче ăслăлăх экспедицийěсенче пулчěç. Проект тăрăх Пушкăртстан чăвашěсен туй йăли-йěркин лексикипе юрри-такмакне пухса тěпчев ěçěсем çырмалла. Авалхи тумсемпе тата мěн ěлěкрен килекен йăла-йěркесене упраса çамрăк ăру патне çитерес тěлěшпе Федоровка районěнче пурăнакан чăвашсем те мухтанма пултараççě.

Çакна та палăртса хăвармалла: 1987 çулхи июнь уйăхěн 1–30-мěшěсенче ЧНТИ экспедици членěсем Федоровка районěнчи Урал ялěнче чăвашсен чěлхине, йăли-йěркисене тěпченě. 2015 çулта ППУěн Çтерлěри филиалěн тутар тата чăваш филологи кафедрин преподавателěсемпе студенчěсем Ашкатар ялěнчи вырăнти калаçупа йăла-йěркесене пухнăччě. Федоровка районěнчи туй мешехи Пушкăртстанри ытти районсенчи чăвашсен туйěнчен чылай уйрăлса тăрать. Ашкатар (вырăсла – Кирюшкино) ялěнче ватăсене пěр çěре пухса экспедици членěсене туй мешехипе паллаштарас тěлěшпе Зинаида Николаевна Семенова (Сурпан) нумай тăрăшрě. Туй йăли-йěркипе паллашнă май, туй арăмěсен ташшине, юрри-такмакне экспедицие килнě преподавательсем çыртарса илчěç. Антонида Вальщиковăпа Наталия Караськина ватăсем пирěнпе хаваспах калаçма кăмăл турěç. Вěсем мěн каласа панине калаçу чěлхине тытса пырса хамăр ěçре çырса кăтартăпăр.

«Калăпăр, туй халăхě пухăннă. Ваттисем – пысăк пӳлěмре, çамрăксем – пěчěк пӳлěмре. Арçын туйěнче (măн кěрӳ – туй ертсе пыраканни, ăна чěлхе-çăвара ăста çынна хураççě). Măн кěрӳ *эрек* (эрех) ěçтерет. Ун арăмě сăра ěçтерет. Унтан туй пуçě 3 çынран тата уртмахçă пысăк сумкапа кашни килěрен мěн пулсан та илет. Туй пěтсен уртмахçă хăйěн сумкинчи япалине (килкартинче шăналăк сарса ачасене çитерет).Туй пуçě пулнă çын çамрăксем ларакан


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

сётелтен виçĕ хут сăра тултарса ваттисем патне кĕмелле, виçĕ хут ыйтмалла: «Эпир çак çурта çĕнĕ çын илсе килес тетпĕр. Çавна илсе килме туй лартас тетпĕр. Çав туя лартма *рĕскет* (пархатар) паратăр-и», – тесе ыйтмалла («Паратпăр», – теççĕ ваттисем). Çурт хуçисем тата хĕрт сурт пире лайăхлăх тĕллĕр. Çу çулпа кайса пыл çупа килме шур пир сарнă çул хатĕрлĕр тесе пуç тайса тухса каймалла.

Арçын туйĕнче ваттисем малтан каяççĕ, кучченеçпе, пĕр пичĕке сăрапа. Унтан вара туй пуç хăй уйрăм кучченеçпе каять. Унтан вара тин туй каять. Хĕр туйĕнче пухăнса лараççĕ те туй пуçлаççĕ.

*Туй пуçланнă чух юрламалли юрăсем*

Çӳлте турă, çĕрте патша.
Тавтапуçах тĕнчене тытнăшăн.
Тавтапуçах аттепе аннене
Пире пăхса хатĕр тунăшăн.
Анатран та килет хура ĕне.
Сĕчĕсене суса сахăр ту.
Эй, аннеçĕм, тетĕп, эй, аннеçĕм.
Ик кăкăрун сĕчĕпе *пахил* (пехил) ту.
Ирхине тăрсан вуттуна хут.
Тĕтĕмĕсем кайччăр ял çине.
Ăçта кайсассăн та лайăх çӳре
Ыр ятăрсем кайччăр ял çине.
Анатра та арман пулман пулсан,
*Çияс* (çиес) çукчĕ эпир тинкеле.
Аттепе анне пулман пулсан,
Курас çукчĕ эпир çут тĕнче.
Вăрăм юрă юрланă хыççăн виçĕ пар ташлаççĕ.
Эй, каян вĕт, каян вĕт.
Сан юлашки кун паян вĕт.
Юта тухса ыр курмасан,


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Эсĕ сая каян вĕт.

Урам урлă каçнă чухне

Çат-çат турĕ патинкка.

Пăхăр халĕ пирĕн *аккана* (аппана) -

Çапса хунă картинкка.

Эх, тăванăм, сирĕнпелен

Çĕкленет-çке кăмăлсем.

Çак çĕкленнĕ кăмăлсемпе

Ирттĕр пирĕн ĕмĕрсем.

Вара ташланă хыççăн сĕтел хушшинчен тухса сĕтел умне кукленсе ларса пуç çапмалла пиллĕкĕн, улттăн. Вăл атте-аннерен *пахиллĕх* (пехил) илни пулать. Мăн кĕрӳ пулаканни авланакан качча сăра курки тыттарать, авланакан каччă çав сăрана пĕр виç *трит* (хут) ваттисен умĕнче пултăр тесе çĕре тумлатать. *Аттĕш-амĕш* (ашшĕ-амăшĕ) пуç çапнă чух пахиллет: ачăр-пăчăр йышлă пултăр, çуртăрта, картăрта выльăх-чĕрлĕх *шеп* (нумай) ĕрчетĕр, акнă тыр-пул уй-хирте ăнса пултăр. Ырă çынсем пулччĕр кӳршĕрте. Турăпалан пӳлĕхçĕ ăраскал валеçнĕ чух çуралнă ачасем пулăр, ĕмĕр-ĕмĕр тату пурăнăр тесе *пахилеççĕ* (пехиллеççĕ) ашшĕпе амăш.

*Пуç çапнă чух юрламалли юрă*

Улма та чăпар пар ута

Укçа пара-пара илетпĕр.

Аттепелен-аннен *пахиллĕхне*

Пуç-çӳçпе пуç çапса илетпĕр.

*Туй халăхĕ кайма тăрсан юрламалли юрă*

Кӳлнĕ те лаша нумай тăрсан,

Хăмăчĕсем тăвăр тияççĕ.

Килнĕ те пĕр туй халăх нумай тăрсан,

Çурт хуçине йывăр тияççĕ.

Ăсаттаттăр пулсан, ай, ăсатăр.

Пусмăр çине тухса та ăсатăр.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Эпир хăш çулпалан кайнине
Ик хура куçăрпа пăхса юлăр.
Эй, каятпăр, тăванăм, эй, каятпăр.
Кайри чӳречĕртен пăхса юлăр.
Кайри чӳречĕртен курăнмасан
Ик аллăра сулса тăрса юлăр.

*Урама тухсан юрламалли юрăсем*

Урамăрсем вăрăм – çуртăр çӳллĕ,
Çурт çӳллипе сахăр-и?
Сат хăмлине татса сăра туса
Юрла-юрла ĕçнисем илемлĕ.
Урамăрсем вăрăм утмашкăн,
Çуртăрсем те çӳлĕ пăхмашкăн.
Пĕвĕр илемлĕ-çке, сăнăр хитре,
Вăтанатăп *çийăра* (çийĕре) пăхмашкăн.

*Урам тăрăх утнă хыççăн пĕрер тăван патне кĕмелле пулсан, хапха умĕнче юрламалли юрăсем:*

Сивĕ çăл пуçĕнчен килтĕмĕр.
Сивĕрен те сивĕ – шăнтăмăр.
Кĕртеттĕр-и, тăванăм, кĕртместĕр-и?
Сирĕн *çия* (çине) шанса.
Пусмăрсем те çӳллĕ – *хăпараймап* (хăпараймастăп).
Алăкăрсем лутра – *кĕреймеп* (кĕрейместĕп).
Кĕрекĕрсен çийĕ – пыл та сахăр.
Кĕрсен çаврăнса *тухаймап* (тухаймастăп).

Пӳрте туй кĕрсен малтан сĕтел умне кукленсе ларса пуç çапаççĕ. Унтан сĕтел хушшине лараççĕ. Авланакан каччă апат тутанса пăхмасăр никам та çисе пăхмасть. Туй кĕрекере чух каччă çуммисем авланакан качча пĕччен хăварса тухман.

*Туй кĕртсен çав туй кĕртекен тăвана мухта-мухта юрламалли юрăсем:*


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Алăкăрсен умне шăлса тытар.

Эп *уйлатăп* (шутлатăп) улма кустарма.

Эсир, тăванăмсем, мĕн *уйлатăр*?

Эпĕ *уйлатăп* пĕрле пурăнма.

Туй туса ташласа тăранса туй тепĕр киле каймалла, каллех кĕреке умне ларса пуç çапмалла, туй кĕнĕ чух пуç çапма ларсан пӳрт хуçисем авланакан качча сăра кăна параççĕ, туй тухнă чух пуç çапма ларсан укçа параççĕ. Туй тухиччен малтан туй пуçĕсем каяççĕ. Туй пуçĕ аллине сăра курки тытса такмаклать.

Якур пуян ывăл авлантарать.

Якур пян хĕр парать.

Пирĕн туя кам чĕнет?

«Эпĕ! Эпĕ!, – тет тепри. – Хĕветĕр пуян патне туй ӳкет. Кучĕпе шăвакан, сăмсипе сывлакан. Хĕветĕр пуян патне туй курма пырăр!» – тет. Туй пуçĕ яшка ас тивсе тепĕр киле уттарать.

Туйра пурте ташламаççĕ, туй арăмĕсем виççĕн ташлаççĕ.

*Хаяр пăрахма кайсан юрламалли юрă.*

Пурăннă чух, тăванăм, пурăнатпăр

Сăртран сăрта çӳрен палан пек.

Таман кунне çитсен уйрăлтăмăр

Татсаях та илнĕ палан пек.

*Хĕр илме кайнă чух юрлмалли юрă.*

Чĕпĕллĕ кăвакал ăçта каять?

Арман пĕви айне шыв ĕçме.

Ку туй халăх пирĕн ăçта каять?

Хĕветĕр пуян патне хĕр илме.

*Хĕр илме кайсан юрламалли юрă.*

Хăтанах хапхи, ай, *вăрăммă* (вăрăм).

Тапса кăна уçса ятăмăр.

Хăтан та йытти кашкăр пек


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Хăрамасăр килсе кĕтĕмĕр.

Туй туса ывăнсан мăн кĕрӳ хур вакласа çитерет. Хур çинĕ хыççăн тумтир кăлараççĕ. Вара пичĕкепе килнисем (ваттисем таврăнса кайнă). Вĕсем таврăнса кайнă хыççăн хĕрпе качча çăмарта çитернĕ. Çăмарта çинĕ хыççăн хăйматлăх пулаканни сурпан сырăнтарса хушпу тăхăнтартнă. Хĕре çĕнĕ витресем тыттарса çăла шыв илме кайнă. Унтан çав шыва туй халăхне укçалла ĕçтернĕ. Унтан арçын туйĕ килне таврăниччен хăйматлăх патне кĕнĕ.

*Киле таврăннă чух юрламалли юрă.*

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет.

Туррăн турă лаши кĕçĕнет.

Таврăнас вăхăтра таврăнмасан,

Пире атте-анне çилленет.

Туй пĕтсен, хĕр илсе килсен уртмахçă туй килĕсенче пухнă апат-çимĕçе шăналăк сарса ачасене чипа-чипа тесе çитерет. Арçын туйĕ кайсан хĕр хăйматлăхпа таврăннă. Хĕр килнĕ хыççăн хĕрпе качча хĕве хупнă. Хĕве хупас умĕн хĕре çу пек çемçе чĕлхеллĕ кин пултăр пĕр кашăк çу, пĕр *калак* (кашăк) пыл хыптарнă, пурнăçĕсем *хулăм* (хулăн) пултăр тесе минтер çине пустарнă».

Чăваш халăхĕн авалтан килекен йăли-йĕркисене манас марччĕ.

Список информаторов

1. Вальщикова Антонида Максимовна, 1939, Федоровский район, Кирюшкино (Ашкадар).

2. Караськина Наталия Степановна, 1938, Федоровский район, Кирюшкино (Ашкадар).

***Список литературы***

1. Уралçум чăвашĕсен вырăнти калаçăвĕсем: II пай / Авт.-хатĕрл. Л.В. Коротаева, Э.А. Петрова, М.О. Алексеева. – Çтерлĕ: Пушкăрт патшалăх университечĕн Çтерлĕ филиалĕ, 2016. – 200 с.

2. Чувашская диалектология. Чувашское народное творчество. Лингвокультурология. Учебно-методическое издание / автор-сост. Л.В. Коротаева, Л.А. Афанасьева, Н.С. Карпова. – Стерлитамак: Стерлитамакский



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

филиал Башкирского государственного университета, 2016. – 187 с.

3. Чуваши Башкортостана: язык, фольклор, культура: Сборник научных трудов. Вып. 2. / отв. ред. Л.В. Коротаева. – Стерлитамак: Стерлитамакский филиал БашГУ, 2017. – 176 с.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)